Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчене пуха тухать

69 (7923) № * Юн кун, 2011 çулхи авăн (сентябрь) уйăхĕн 7-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Сарайĕнче хăтлă, таса

Санăн çыннусем, район



***Çын ĕçе илемлетмест, ĕç çынна илем кӳрет. Халăхăмăрăн çак чăнлăхне «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕн Çĕньял Шурчари сĕт тата сысна фермисенче курма пулать. Асăннă фермăсен коллективĕсене ертсе пыракан тата вырăнти ĕçсене йĕркелесе тăракан Татьяна Валентиновна Иксанова хăйне шанса панă ĕçсене яланах ыранхи кунпа çыхăнтарса пырать. Çапла вара фермăсен территорийĕсем кунта çумран, тислĕкрен, строительство каяшĕсенчен таса. «Ферма ĕçченĕсем кунта маттур. Тирпейлĕх те вĕсен аллисен ĕçĕ», – терĕ ферма ĕçченĕсен тӳпине мала кăларса Татьяна Валентиновна.***

***Тирпейлĕ çĕрте производство та ăнăçлăрах аталанать. Çапла пултăрччĕ те.***

**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

Йышăну

## Райхаçат парнисене çĕнсе илессишĕн

Кăçалхи сентябрĕн 6-мĕшĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ «Чăваш Ен Спорт тата пресса фестивалĕн 1-мĕш тапхăрне хутшăнса районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсем, организацисен, учрежденисен, предприятисен, учительсен тата ял тăрăхĕсен физкультура коллективĕсем хушшинче сентябрĕн 10-мĕшĕнче çăмăл атлетика ăмăртăвне ирттересси пирки» 898 № йышăну тунă.

Ăмăртăва хатĕрленсе ирттерме йĕркелӳ комитетне туса хунă. Ăна район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ертсе пырать. Комисси председателĕн çумĕ – район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, район администрацийĕн йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ Л.Ю. Тарасова.

Асăннă йышăнупах ăмăртăва хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе туса ирттермелли ĕçсен вăхăчĕсене тата ответлисене палăртнă.

**Ăмăрту положенийĕ хаçатăн 4-мĕш страницинче пичетленет.**

Республикăра

## 467,5 миллион тенкĕ килмелле

Раççей Федерацийĕн Правительствин 2011 çулхи августăн 25-мĕшĕнче йышăннă 1511-р хушăвĕпе килĕшӳллĕн 2011–2017 çулсем валли палăртнă «Таса шыв» федераллă тĕллевлĕ программăпа пăхнă тăрăх регионсенчи шывпа тивĕçтерессин, шывсене тасатассин программисене пурнăçлама 2011 çулта субсиди шучĕпе укçа-тенкĕ уйăрма пăхнă.

Асăннă хушупа килĕшӳллĕн çак тĕллевпе уйăрма палăртнă 3 миллиард тенкĕрен Чăваш Республики валли 467,5 миллион тенкĕ уйăраççĕ. Унпа Патăрьел, Шăмăршă районĕсенче тата Комсомольски районĕн кăнтăр районĕнче ушкăнла шыв отвочĕсем, Вăрнарта ушкăнла шыв отвочĕ, шыв тасатмалли станци, санитари хӳтĕлев зонисем тунă çĕрте усă курĕç.

## Космонавт ячĕпе – палăк

Чăваш Республикин Хисеплĕ гражданинĕ Андриян Григорьевич Николаев çуралнă кун Шупашкарта палăк уçăлнă.

Шăп 49 çул каялла, 1962 çулхи çурла уйăхĕн 11-мĕшĕнче, А.Г. Николаев тĕнче уçлăхне вĕçнĕ. Сакăр çултан, 1970 çулхи утă уйăхĕнче, вăл космоса тепĕр хут парăнтарнă, уçлăхра 17 талăк та 17 сехет пулнă. Ку вăл ун чухне чи вăрăмми шутланнă.

Чăваш çĕрĕнче çуралнă виççĕмĕш номерлĕ космонавт наци паттăрĕ кăна мар, пĕтĕм тĕнче пĕлекен тата юратакан çын пулса тăнă. Пирĕн ентеш хăйĕн пархатарлă ĕçĕсемпе Раççейĕн тата ют çĕр-шывсен вун-вун наградине тивĕçнĕ. Чăваш Енĕн Паттăрлăхпа Ĕç Мухтавĕн Хисеплĕ кĕнекине унăн хушаматне чи малтан кĕртнĕ.

Андриян Григорьевич Николаев – пирĕн республикăн, Калуга, Каспийск, Махачкала, Нальчик, Ржев, Смоленск, Гюмри, Караганда, Дархан, София, Варна, Петрич, Плавен, Карлова Вары, Буир хулисен Хисеплĕ гражданинĕ. Уйăхăн тепĕр енчи кратерĕ, Франци Иосиф çĕрĕн архипелаг çинчи пăрлă куполĕ, Антарктидăри ту хысакĕ, пăрахутсем, нумай-нумай урампа шкул, çамрăк космонавтсен отрячĕ Чăваш Енĕн çăлтăрлă ывăлĕн ячĕпе хисепленсе тăраççĕ.

Авăн уйăхĕн 5-мĕшĕнче, СССР летчик-космонавчĕ, авиацин генерал-майорĕ, Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕ, Чăваш Республикин Хисеплĕ гражданинĕ Андриян Григорьевич Николаев çуралнă кун, Шупашкарта унăн палăкĕ уçăлнă. Паллă пулăма Чăваш Республикин Президенчĕ Михаил Игнатьев, космонавтăн пĕртен-пĕр хĕрĕ Елена Терешкова тата ытти сумлă хăнасем пуçтарăннă. Çак монумент– Космонавтика скверĕн пуçламăшĕ пулса тăрать. Вăл пирĕн ентешĕмĕрĕн пархатарлă ĕçĕсемпе паттăрлăхне кăтартакан символ пулса тăрĕ.

Ĕçпе тивĕçтересси

## Ĕçлеме кăмăл пулсан

Кăçал районти çынсене ĕçпе тивĕçтерекен центр ĕç паракансемпе çыхăнса ĕç рынокĕнчи тăнăçлăха тивĕçтерессипе республика шайĕнче йышăннă тĕллевлĕ программăн çĕнĕ енĕсенчен пĕрне пурнăçа кĕртме тытăнчĕ. Ку вăл нумай ачаллă çемьесенчи ашшĕ-амăшĕ валли хушма ĕç вырăнĕсем йĕркелеме пулăшассипе çыхăннă. Çулталăк хушшинче çапла майпа нумай ачаллă çемьесенчи ашшĕ-амăшĕ валли çĕнĕрен 8 ĕç вырăнĕ йĕркелеме, ку тĕллевпе 400 пин тенкĕ уйăрма палăртнă.

Ĕç паракансем çак категорие кĕрекен çынсем валли вĕсен специальноçне, професси шайне тата ĕç хăнăхĕвĕсене кура çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркелеççĕ. Çавна валли кайнă тăкаксене ĕç паракана пĕр ĕç вырăнĕшĕн 50 пин тенкĕ шучĕпе ĕçпе тивĕçтерекен центр саплаштарать.

Çапла вара çак вăхăта ĕç паракансемпе 3 килĕшӳ тунă ĕнтĕ, çĕнĕрен 4 ĕç вырăнĕ йĕркеленĕ. Нумай ачаллă çемьесенчи ашшĕ-амăшĕсем виççĕн ятарласа хатĕрленĕ çĕнĕ ĕç вырăнĕсенче ĕçе пуçăннă та.

**Хамăр инф.**

Район уй-хирĕсенче

## Юлашки гектарсем çинче

Районти хуçалăхсенче вырма ĕçĕсем юлашки гектарсем çинче пыраççĕ. Ĕнерхи кун тĕлне тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене 14157 гектар (94 процент) вырса çапнă.

Пĕтĕмпе 35265 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ. Тухăç пĕр гектар пуçне вăтамран 24,9 центнерпа танлашать. Çав вăхăтрах вăл Ильич яч. хис. хуçалăхра 34,9 центнер, «Ударник» хуçалăхра 31,7 центнер.

Улăма 11766 гектар çинчен (вырса çапнин 83 процентчĕ) пухса тирпейленĕ.

Кĕр аки ирттерме 4449 гектар (67 процент) çĕр хатĕрленĕ. Кĕрхи культурăсене 3037 гектар (46 процент) акнă. Суворов яч. хис. хуçалăх ку тĕлĕшпе плана 115 процент тултарнă, кĕр аки ĕçĕсене 460 гектар çинче туса ирттернĕ.

Хуçалăхсенче çĕр улми кăларса пухас ĕçсем пуçăнаççĕ. Ĕнерхи куна «иккĕмĕш çăкăра» 21 гектар çинче кăларнă.

Пулăшу укçи-тенки

## Федераллă бюджетран – 284,3 млн. тенкĕ

Патшалăх пулăшăвĕ Чăваш Еншĕн самантлăха та юлса пымасть. Акă 2011 çулхи çурла уйăхĕн 26-мĕшĕнче те республикăна федераллă бюджетран субсиди укçи-тенки килсе çитнĕ:

– ял хуçалăх культурисене, нумай çул ӳсекен куракçсене страхлама кайнă тăкаксене саплаштарма тивекен компенсаци 120 миллион тенкĕлĕх;

– пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха реформăлама пулăшакан Фондран нумай хваттерлĕ çуртсенче капиталлă юсав ĕçĕсем ирттерме 93,9 млн. тенкĕ, граждансене авариллĕ çурт-йĕр фондĕнчен куçарма каякан тăкаксене саплаштарма 70,4 миллион тенкĕ.

**ЧР Финанс министерстви.**

Ĕçре пултаруллисем

## Хастаррисене – наградăсем

***Чăваш Республикин Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин Хисеп грамотине тивĕçнĕ:***

– **Ирина Григорьевна ГРИГОРЬЕВА**, Оринин шкулĕн директорĕн вĕрентӳпе воспитани парас енĕпе ĕçлекен çумĕ;

– **Вена Николаевна ИВАНОВА**, Муркаш шкулĕн биологи учителĕ;

– **Юрий Юрьевич ИВАНОВ**, Москакасси шкулĕн технологи учителĕ;

– **Людмила Александровна МИТРОФАНОВА**, ачасен пултарулăх çурчĕн хушма вĕрентĕвĕн педагогĕ;

– **Валентина Николаевна НИКОЛАЕВА**, Чуманкасси шкулĕн директорĕн воспитани парас енĕпе ĕçлекен çумĕ;

– **Федор Александрович РЫЛИН**, ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн директорĕ;

– **Раиса Ниловна МАКСИМОВА**, «Солнышко» ача сачĕн поварĕ.

***Чăваш Республикин Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин Тав çырăвне тивĕçнĕ:***

– **Валерий Валерианович ДАШКОВ**, Сыпайкасси шкулĕн директорĕ;

– **Александр Леонидович ШИШКИН**, Сыпайкасси шкулĕн хоккей енĕпе обществăлла тренерĕ.

***«Единая Россия» партин регион уйрăмĕн Тав çырăвне тивĕçнĕ:***

– **Александра Александровна СКВОРЦОВА**, Ярапайкасси шкулĕн педагог-психологĕ;

– **Николай Семенович СТЕПАНОВ**, Очăкассинчи пуçламăш шкул-ача сачĕн директорĕ.

***Район администрацийĕн Хисеп грамотине тивĕçнĕ:***

– **Татьяна Георгиевна ЕРМОЛАЕВА**, Мăн Хураçка шкулĕн директорĕ.

***Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн Хисеп грамотине тивĕçнĕ:***

– **Алина Юрьевна АЛБУТОВА**, Кашмаш шкулĕн математика учителĕ;

– **Евгения Васильевна ПЕТРОВА**, Йӳçкасси шкулĕн вырăс чĕлхипе литературин учителĕ;

– **Ирина Венедиктовна ОСИПОВА**, Калайкасси шкулĕн вырăс чĕлхипе литературин учителĕ;

– **Юрий Георгиевич СКВОРЦОВ**, Атапай шкулĕн математика учителĕ;

– **Анжелика Витальевна САЛЬНИКОВА**, Катькасри пуçламăш шкул-ача сачĕн пуçламăш классен учителĕ.

Саламлатпăр

Уйкас Хачăк ялĕнче пурăнакан **Василий Федорович СМИРНОВА** çуралнă кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатпăр. Сывлăху çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм та телейлĕ килтĕр. Ачусемпе, мăнукусемпе савăнса пурăнмалла пултăр, сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр.

**Салампа çывăх юлташĕсем.**

Çырăнтару

## Хаклă вулакансем!

**Райхаçата малалла çырăнтараççĕ. Октябрь уйăхĕнчен илсе тăма çыхăну уйрăмĕн ĕçченĕсемпе тĕл пулма васкăр.**

# Лару-тăру лăпкă мар

## Çул-йĕр çинче

Çул-йĕр çинче 2009 çултанпа пассажир турттаракан транспорт хутшăнăвĕпе пулакан аварисен хисепĕ ӳссех пырать. Çулталăкăн пĕрремĕш çурринче автобус хутшăннипе Раççей Федерацийĕнче 5098 авари пулнă, 579 çын пурнăçран уйрăлнă, 7483 çын аманнă. Инкек-синкек ытларах чухне автобус водителĕн айăпĕпе пулать.

Чăваш Республикинче 26 авари регистрациленĕ, çакă пĕтĕмĕшле аварисен 3,9 процентчĕ шутланать. Инкекре 43 çын суранланнă. Районти 3 аварире 6 çын аманнă.

Лицензиллĕ автобус водителĕсен айăпĕпе пулнă 7 аварие регистрациленĕ, 10-ăн суранланнă.

Аварисен сăлтавĕ тĕрлĕрен. Хăшĕ рейса тухас умĕн медицина тĕрĕслевĕ витĕр тухмасть, тепри вара ĕçпе кану вăхăтне пăхăнмасть. Çул-йĕр çине чылай чухне юсавсăр автотранспорт тухни те инкек сăлтавĕ пулма пултарать.

Çул-çинчи лăпкă мар лару-тăрăва ырă енне улăштарас тĕллевпе районта тата республикăра августăн 15-мĕшĕнчен пуçласа 28-мĕшĕччен «Автобус» профилактика ĕçĕ ирттернĕ. Çавна май çак ĕç вăхăтĕнче хăш-пĕр çитменлĕхе тупса палăртнă, ответлисене явап тыттарнă.

Акă августăн 27-мĕшĕнче Мускав/Ĕпхӳ автоçул çинче Юнкăпуç ялĕ çывăхĕнче Етĕрне районĕнчи ИЖ ОДА автомашина водителĕ йĕркене сĕмсĕррĕн пăснă, хирĕç килекен МЕРСЕДЕС 0303-15Т автобуса çул паман. Çапла вара аварире суранланнă çынна Муркашри тĕп больницăна илсе çитерме тивнĕ.

Экспертиза аварие лекнĕ водительсем ӳсĕр пулнине палăртман. ИЖ ОДА автомашинăн водителĕ ăнлантарнă тăрăх автомашина салонĕнчи тĕкĕр çуккипе ытти транспорта курма пултарайман.

**С. ИВАНОВ,**
**районти ГИБДД уйрăмĕн пуçлăхĕ, полицин аслă лейтенанчĕ.**

## Спорт

**Чăваш Ен Спорт тата пресса фестивалĕн 1-мĕш тапхăрне хутшăнса районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсем, организацисен, учрежденисен, предприятисен, учительсен тата ял тăрăхĕсен физкультура коллективĕсем хушшинче ирттерекен çăмăл атлетика ăмăртăвĕн положенийĕ**

**1. Тĕллевĕсемпе задачисем.**

Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçатăн парнисене çĕнсе илессишĕн шкул ачисемпе учительсен коллективĕсем хушшинче çăмăл атлетика ăмăртăвне спортăн çак тĕсне анлăрах сарас, сывă пурнăç йĕркине çирĕплетес тата шкул ачисем хушшинче чупассипе мал туртăмлисене тупса палăртас тĕллевпе ирттерессĕ.

**2. Ăмăрту ирттермелли вăхăт тата вырăн.**

Ăмăрту Муркашра тĕп площадьре сентябрĕн 10-мĕшĕнче иртет, 10 сехетре пуçланать.

**3. Ăмăрту участникĕсем тата программи.**

Ăмăртăва пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсен командисем, организацисен, учрежденисен, предприятисен физкультура коллективĕсем, учительсен коллективĕсем тата ял тăрăхĕсен командисем хутшăнаççĕ.

**Командăра çаксем пулмалла:**

– пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулсен – 11 çын (5 яш тата 5 хĕр, 1 представитель);

– пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулсен – 7 çын (3 яш тата 3 хĕр, 1 представитель);

– организацисен, учрежденисен, предприятисен, учительсен коллективĕсен тата ял тăрăхĕсен физкультура коллективĕсен – 5 çын (3 арçын тата 2 хĕрарăм).

**Программа: хутăш эстафета.**

– яшсемпе хĕрсем 400-шер метр чупаççĕ;

– арçынсемпе хĕрарăмсем 400-шер метр чупаççĕ.

**4. Командăсене йышăнмалли тата наградăламалли условисем.**

Ăмăрту ирттерме, çĕнтерӳçĕсене наградăлама тата судьясен коллегине тӳлеме каякан тăкаксене район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ, районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ саплаштараççĕ. Ăмăртăва хутшăнакансене вырăна илсе çитересси, апатлантарасси – хăйсен организацийĕсен шучĕпе.

**5. Наградăласси.**

Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулсем хушшинче мала тухнă командăна диплом тата куçса çӳрекен кубок параççĕ, çур çуллăх районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата çырăнса параççĕ. 2-мĕшпе 3-мĕш вырăн йышăннă командăсем дипломсемпе хаклă парнесене тивĕçеççĕ.

Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулсем хушшинче мала тухнă командăна диплом тата куçса çӳрекен кубок параççĕ, çур çуллăх районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата çырăнса параççĕ. 2-мĕшпе 3-мĕш вырăн йышăннă командăсем дипломсемпе хаклă парнесене тивĕçеççĕ.

Организацисен, учрежденисен, предприятисен, учительсен коллективĕсен тата ял тăрăхĕсен физкультура коллективĕсем хушшинче мала тухнă командăна диплом тата хаклă парнесем параççĕ тата çур çуллăх районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата çырăнса параççĕ. Призлă вырăн йышăннă ытти командăсем дипломсемпе хаклă парнесене тивĕçеççĕ.

**6. Ăмăртăва хутшăнма заявкăсем тăратасси.**

Ăмăртăва килнĕ кун командăсен представителĕсем судьясен коллегине ятран çырнă заявкăсем тăратаççĕ. Вĕсене ертӳçĕпе врач алă пусса çирĕплетмелле.

## Сăвă

# Тăван ен

Анаткас Турай ман ялăм –
Йăх тымарăм çакăнтан.
Эринка Улхаш урамĕ –
Эс тухмастăн асăмран.
Ман урам, Куршак кукри,
Маншăн çук сиртен хакли.
Авăнса ӳсет йăмри –
Кашни кил умне лартни.
Шут тытсан канма чунпа
Вĕтĕ хурăн урамне
Çул тытсамччĕ эс, унта
Пĕлĕнех çăтмах мĕнне.
Еплерех унта пахчи!
Сад пахчи – чечек ĕшни.
Сухалне шăлать мучи:
– Йывăçран пурах усси.
Йывăçне кура – çеçки,
Хуçине кура – пахчи.
Тĕрлĕ çимĕç куç тулли,
Ӳркенместĕн – тат та çи.
Кайăксен хавас кĕвви
Çур çуччен кунта ян(ă)рать.
Питрава килсен хăти
Кашни кил хăна тăвать.
Капăр тумлă инкесен
Хавас юрри илтĕнсен
Сан чуну пĕрле юрлать,
Мĕн ырри кăна юлать.
Хуйхă-суйхă, ырату
Самантрах çумран тарать.
Ял-йышпа ялан тату
Пурăнма чĕре ыйтать.
Орловсен урамĕ теççĕ
Ялăн тепĕр урамне.
Ăмăрт кайăк йăх йышне
Таврара пĕлеççĕ.
Асаннем ман çак йăхран,
Çирĕп ун тымарĕ.
Маншăн хаклă пур мулран
Ĕмĕрсен кăварĕ.

**О. КЛЕМЕНТЬЕВА.**

## Вулакан пултарулăхĕ

# Аккан çуралнă кунне халалласа...

**(«Пурнăç авăрĕ» ярăмран)**

Кунран-кунах пурнас çулсем
Пыраççĕ кĕскелсе.
Чун хурланать, акка, çапах
Ларсам эс çумарах.
Сана чунтан хисеплесе,
Чун-чĕреме уçса
Турăш умне чĕркуçленсе
Эп калăп виç сăмах:
– Эпир пĕчĕкчĕ пиччепе,
Аттеччĕ тĕрмере.
Анне аран-аран тăвса
Çумлатчĕ пиçене.
Эс пирĕншĕн апиччĕ те, атти,
Ĕçлетĕнччĕ чĕкеç пулса
Кунне-çĕрне манса.
Кам пана-ши вăйне?
Çапла, акка, ура çине
Тăратрăн эс пире.
Салтак çулне çитсен пичче
Ăсанчĕ çурçĕре.
Халь те васкать килсе курма,
Анчах çулсем инçе...
Салам яратпăр пĕр-пĕрне:
Привет, пичче, привет!
Ял-йыш, тăвансемпе эпир
Уçман усал сăмах.
Чунпа туртăннă, пĕр-пĕрин
Укçи пулман пачах.
Саплăк çине саплăк хурса
Çĕнелнĕччĕ кĕпе.
Куплаклă çăпата сырсан
Яраттăмччĕ ташша...
Атти-апи тахçан ĕнтĕ
Пурнаççĕ пуль райра.
Эпир вара халь те пĕртте
Манмастпăр иртнине.
Ак чупрĕ 45 çул
Эс Шашкара кайни.
Мĕнле хавасчĕ, аса ил,
Каçма Йăлăм енне.
Çурчĕ умра, пурте хыçра
Тесе халь ан кала.
Пурнатăн эс ялан куçра,
Вăрçсам пире, ятла.
Чунпа санпа пуплес килет,
Калаç, акка, калаç.
Çĕр çул сана сунас килет,
Тур пулăштăр, тивлет!
Чăн-чăнах илемлĕ çутă кун,
Çав илемсĕр хĕсĕр пирĕн чун.
Эс пурри – пурне кĕтнĕ кĕтес,
Валеçен тулли пыллă чĕрес.
Кил, ĕçер пĕршер тулли черкке,
Чуп тăвам сана, епле эс чиперкке.
Ыталам чун ăшшине парса,
Макăрам вăрттăн куççуль шăлса.

**Василий МАКСИМОВ.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 2-5.



ОКОННЫЕ СИСТЕМЫ ENWIN
ОКНА от 10500 рублей под ключ.
Замер. Доставка бесплатно.
Тел.: 37-55-39, 8-927-667-55-39.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник.
Тел.: 8-906-131-32-75, 8-927-859-91-55. 2-5.

* * *

Ĕне, вăкăр, тына, пăру, сурăхсем туянатпăр.
Тел.: 8-903-063-07-57. 2-2.

* * *

Хĕрлĕпе шурă тĕслĕ виççĕмĕш пăруламалли ĕне сутатăп. Тел.: 8-927-994-37-36.

* * *

Ултă пăрулană хура-шурă ĕне сутатпăр. Ярославка ялĕ. Тел.: 8-905-345-41-69.

* * *

Пĕрре пăрулană хура-шурă ĕне сутатăп. Вускаси ялĕ. Тел.: 8-927-669-83-47.

* * *

Мунча пури 3мх3м, хыр йывăçран, сутатăп. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Тел.: 8-903-065-58-68.

* * *

Снимем квартиру в с. Моргауши, чистоту и порядок гарантируем. Тел.: 8-927-862-98-84, 8-937-951-52-00.

* * *

Продается земельный участок 35 сот. в д. Токшики Большесундырского сельского поселения. Цена договорная. Тел.: 8-906-382-29-80.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:060405:50, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, ул. Советская, для строительства и обслуживания зданий и сооружений, площадью 856 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:070505:172, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 2013 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:1160, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, земельный участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения прудового хозяйства, площадью 6000 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:020303:167, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:020303, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 5747 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Собственники земельных долей, находящихся на территории землепользования СХПК «Сеятель» Моргаушского района Чувашской Республики сообщают, что 6 октября 2011 г. в 14.00 часов состоится собрание участников долевой собственности по поводу определения местоположения участков, выделяемых в счет земельных долей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Ярославка, ул. Центральная, д. 5 в здании Дома культуры.

## Следстви комитетĕнчен

# Йĕрке хуралçисем çине алă çĕкленĕ

Эрех ĕçни нихăçан та ырри патне илсе пымасть. Унăн витĕмĕ пуçа минретет, усал шухăш çуратать.

Акă пĕр арçын ӳсĕрле руль умне ларать. Паллах, вăл республикăри ГИБДД ĕçченĕсене тĕл пуласса ĕмĕтленмен. Лару-тăру вара урăхларах килсе тухнă, йĕрке хуралçисем автомашина тата ытти документа кăтартма ыйтнă. Анчах та ӳсĕр арçын вĕсене хирĕçлет, хăйне йĕркесĕр тытать, киревсĕр сăмахсемпе перкелешет. Çакăнпа кăна çырлахмасть-ха вăл, йĕрке хуралçисем çине алă çĕклет, темиçе хутчен çапать. Çапла вара ӳсĕр арçын Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 318 статйин 1 пайĕнче пăхнă йĕркене пăсать, влаç представителĕсем çине алă çĕклет. Уголовнăй Кодексĕн çак статйине пăснă пирки пилĕк çул таран ирĕкрен хăтарма пултараççĕ.

Çак кунсенче следстви комитетчĕ уголовлă ĕç тĕлĕшпе айăплав пĕтĕмлетĕвне çирĕплетме материала район прокурорĕ патне çитерчĕ.

**В. ДОЛГОВ,**
**уйрăмах пĕлтерĕшлĕ ĕçсен следователĕ, юстици капитанĕ.**

## Юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн

# Тав тăватпăр

Анаткас Апаш ялĕнче пурăннă пире çуратса пурнăç çулĕ çине кăларнă аннене, асаннене, хунямана Мария Яковлевна Герасимовăна юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пайланăшăн ялта пурăнакансене, кӳршĕсене, тăвансене чĕререн тав тăватпăр.

**Герасимовсен çемйи.**




## Прогноз погоды

| | среда 7 сентября | | | | четверг 8 сентября | | | | пятница 9 сентября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | +10 | +13 | +15 | +12 | +12 | +13 | +15 | +11 | +11 | +13 | +14 | +11 |
| Давление мм | 738 | 737 | 736 | 736 | 735 | 736 | 736 | 735 | 734 | 734 | 734 | 735 |
| Влажность % | 100 | 98 | 88 | 100 | 100 | 91 | 76 | 97 | 100 | 96 | 88 | 97 |
| Ветер | С | С | С | С-В | С-В | В | В | В | В | Ю | Ю-В | Ю-В |
| м/сек | 6 | 4 | 6 | 2 | 3 | 3 | 3 | 2 | 2 | 4 | 4 | 3 |
| Солнце восход/заход | | 06:08 | 19:33 | | | 06:10 | 19:30 | | | 06:12 | 19:28 | |
| Луна восход/заход | | 17:17 | 00:10 | | | 17:41 | 01:25 | | | 18:00 | 02:41 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

Тĕп редакторшăн В.Л. ШАПОШНИКОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 06.09.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4357.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.